25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пуҫ.

1945
АПРЕЛЬ
11
ЮНКУН
69(6820) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА
СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

Продукци пахалăхне лайăхлатсах пырар

Пирĕн фабрикăсенче заводсенче Чăваш республики 25 çул тултарас ятпа социализмлă ăмăрту сарăлса пырать. Предприятисен коллективĕсем чăваш халăхĕн уявне ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн ăмăртăва хутшăнаççĕ. Ăмăртăва хутшăнаканскем продукци хисепне ӳстерме кăна мар, унăн пахалăхне те лайăхлатма обязательствăсем илеççĕ, фронтпа çĕршыва лайăх продукци туса пама пулаççĕ. Çĕмĕрле комбиначĕн коллективĕ, уяв уменхи ăмăртăва пуçарса ярса, продукци пахалăхне тĕпренех лайăхлатма, цехсенче брак пулассине январь уйăхĕнчиччен 25 процент чухлĕ чакарма обязательство илнĕ. Шупашкарти чăлха фабрикинче ĕçлекенсем продукцие пĕтĕмпех лайăх пахалăхлăн туса кăларма, пĕрремĕш сортлă изделисем хисепне плана пăхнинчен 2 процент чухлĕ ӳстерме пулнă.

Ăмăртăва хутшăнаканскем çакна ӳçĕн курса тăраççĕ: Хĕрлĕ Çарпа халăх валли кирлĕ япаласене планран иртерсе кăна мар, тата пахалăхлăн туса кăларсан çеç ăмăртура мала тухма пулать, çакă вара чăваш халăхне ӳсĕ кунĕ тĕлне паха парне кӳни пулать.

Продукци пахалăхĕ—Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăван законĕ, унăн тĕп тĕслехĕсенчен пĕри. Малта пыракан предприятисем производство планне ăнăçлăн тултарнипе пĕрлех, лайăх пахалăхлă продукци туса кăларассишĕн кĕрешеççĕ. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводăн хăшпĕр цехĕсенче иртнĕ уйăхра брак тухни палăрнă. Заводри техникăллă контроль отделĕ вара çав цехсенчи ĕç пахалăхне вырăнта тĕрĕслесе тăма ятарласа контролерсен бригадине тунă. Тăватă комсомолецран тăракан контроль бригади, кашни рабочин продукцине уйрăмăн тĕрĕслесе тăрса, çав цехсенчи брака пĕтернĕ. Челноков, Котов юлташсем главнăй инженерсем пулса ĕçлекен заводсем те Хĕрлĕ Çара паха продукци туса парассишĕн кĕрешеççĕ.

Республикăри мĕнпур заводсемпе фабрикăсен ĕç пахалăхĕшĕн кĕрешме малта пыракан предприятисенчен вĕренмелле, вĕсенчен пример илмелле.

Ĕç пахалăхне лайăхлатмалли майсенчен пĕри вăл—талăкри графика пăхăнса ĕçлени пулать. Рабочисен ĕçне тĕрĕс организацилемелле, производствăра çирĕп йĕркене тĕрĕслесе тăмалла. Брак çаврăнсанскемпе продукцие пăсаканскене хирĕç, чĕтăварсемпе, материалсене сая ярасканскене хирĕç пĕр хĕрхенӳсĕр кĕрешмелле.

Çакна асра тытмалла: начар продукци панине мирлĕ вăхăтрах хыттăн сивлеме пулсан, вăрçă вăхăтĕнче ăна вара пушшех те тĕрме çук. Халĕ лайăх ĕçлени Хĕрлĕ Çара пулăшать, начар ĕçлени сиен кӳрет. Начар продукци пани государство умĕнче айăпа кĕни пулать.

«Пахалăхсăр е комплектлă мар продукци панăшăн тата обязательнăй стандартсене пăснăшăн промышленность предприятийĕсем ответлă пуласси çинчен» СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1940 çулхи июлĕн 10-мĕшĕнче кăларнă Указа çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пымалла. Изделипахалăхĕшĕн предприятири кашни работник фронтпа çĕршыв умĕнче ответлă пуласси çинчен.

Хуть те кам пул эсĕ: техник е инженер, токарь е слесарь, хуть те ăста ĕçле эсĕ—цехра, мастерскойра, складра—пур çĕрте те, пур ĕçре те, пур чух та пахалăхшăн кĕреш! Кашни изделе, кашни деталь, винт пахалăхлă пултăр. Лайăх товар ĕççыннисене ытларах усă парать, лайăх хĕçпăшал тăшмана ытларах пĕтерет. Пахалăх çĕнтерӳ ячĕпе çывăрмасăр пулăшать!

Югославири Министрсен Совечĕн Председателĕ И. Броз-Тито Маршал ячĕпе Югослави Посольствинче пулса иртнĕ йышăну

Апрелĕн 9-мĕшĕнче Югославин Совет Союзĕнчи Посолĕ С. Симич господин Югославири Министрсен Совечĕн Председателĕ И. Броз-Тито Маршал ячĕпе йышăну туса иртернĕ.

Йышăнура çаксем пулнă: И. Броз-Тито Маршал, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, СССР Тулашри суту-илӳ Халăх Комиссарĕ А. Й. Микоян, СССР Халăх Комиссарĕсем флот адмиралĕ Н. Г. Кузнецов, А. И. Шахурин, Б. Л. Ванников, В. А. Малышев, Д. Ф. Устинов, П. Ф. Ломако, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕсем А. Я. Вышинский, С. А. Лозовский, С. И. Кавтарадзе, И. М. Майский, Совет Союзĕн Югославири Посолĕ И. В. Садчиков, Совет Союзĕн Маршалĕ С. М. Буденный, УССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Д. З. Мануильский, А. Ф. Горкин, Хĕрлĕ Çарăн Генеральнăй Штаб Начальникĕ армби генералĕ А. И. Антонов, Мускав хула Совечĕн Председателĕ Г. М. Попов, ВЦСПС Председателĕ В. В. Кузнецов, авиаци Маршалĕ Ф. Я. Фалалеев, инженери çарĕсен Маршалĕ М. П. Воробьев, генерал-полковник Ф. И. Голиков, СССР Наркоминделĕн, Оборона Халăх Комиссариачĕн, Тулашри суту-илӳ Халăх Комиссариачĕн ответлă сотрудникĕсем, Совет Союзĕпе ют çĕршывсен пичечĕн представителĕсем, писательсем тата артистсем пулнă.

Йышăнура тата ют çĕршывсен Посолĕсемпе Посланникĕсем, союзлă çĕршывсемпе нейтральнăй çĕршывсен Çар Аташисем тата Çар Миссийĕсен Начальникĕсем пулнă.

Йышăнура çаван пекех тата Югославин Мускава пынă çак паллă деятелĕсем пулнă: Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ И. Шубашич господин, Черногори Ĕçĕсен Министрĕ М. Джилас генерал-лейтенант, Суту-илӳпе Снабжени Министрĕ Н. Петрович господин, Сăрт-ту промышленность Министрĕ Б. Андреев господин, Югославин Совет Союзĕнчи Çар Миссийĕн Начальникĕ Р. Приморац генерал-лейтенант, Югослави Правительствин тата Совет Союзĕнчи Çар Миссийĕн членĕсем. (ТАСС).

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Чăваш республикинчи колхозсене, колхозниксене тата единоличник хуçалăхĕсене тырнул сутма ирĕк парасси çинчен

СССР Союзĕн Совнаркомĕ 1945 çулхи апрелĕн 8-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

Колхозсене, колхозниксене тата единоличниксен хуçалăхĕсене Чăваш республикинчи хуласемпе ялсенчи базарсенче, çаван пекех тата чугун çул станцийĕсенче тырпул (тĕштырă, çăнăх, пĕçернĕ çăкăр) сутма ирĕк парас.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 9-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, урамсенче вăйлă çапăçнă хыççăн, нимĕç çарĕсен КЕНИГСБЕРГРИ ушкăнне çапса аркатнă та паян, апрелĕн 9-мĕшĕнче, Хĕвелтухăç Пруссин крепоçĕпе тĕп хули пулса тăракан КЕНИГСБЕРГ хулине—нимĕçсен Балтика тивĕçлĕ çинчи оборонин стратегиллĕ паха узелне—штурмласа туртса илнĕ.

Кун каçичченхи çапăçусенче 20 сехет тĕлне фронт çарĕсем нимĕçсен 27.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ, çаван пекех тата хĕçпăшалпа ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕ нумай тытса илнĕ.

Крепость комендантĕ инфантери генералĕ ЛЯШ тата унăн штабĕ ертсе пыракан Кенигсберг гарнизонĕн юлашкийĕсем 21 сехет те 30 минутра хирĕç тăма чарăннă та хăйсен хĕçпăшалĕсене пăрахнă.

БРАТИСЛАВĂРАН çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата çурçĕртерехре УКРАИНАРИ 2-мĕш фронт çарĕсем çаплах малалла тапăнса пынă, Чехословакки çĕрĕнче халăх пурăнакан 40 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра—СОБЛАГОВ, БЕЦКОВ, СТАРА ТУРА, СОБОТИШТЕ, ЛОПАШОВ, РАДИМОВ ятлă пысăк ялсем. БРАТИСЛАВА. РАН хĕвелтухăçнерехре фронт çарĕсем ДУНАЙ шывĕн çурçĕр хĕррипе ВЕНА çине тапăнса пынă, ЦВЕРНДОРФ, ОБЕР ВАЙДЕН, ШЕНФЕЛЬД, ЛАСЗЕЕ, ХАРИНГ. ЗЕЕ, ФУКСЕНБИГЛЬ, ШТРАУДОРФ, ОРТ, МАНСДОРФ, ШЕНАУ ялĕсене туртса илнĕ. Апрелĕн 8-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем тăшманăн 2.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

УКРАИНАРИ 3-мĕш фронт çарĕсем ВЕНА урамĕсенче çапăçнă, хула центрне йышăннă, унта парламентăн, хула ратушин, полицин тĕп управленийĕн, хуларн тĕп телеграфăн, Тĕп Европа банкĕн, опера театрĕн çурчĕсене тытса илнĕ. ВЕНАРАН кăнтăр-тарахра фронт çарĕсем БЕРНДОРФ хулине çапăçса туртса илнĕ. Апрелĕн 8-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем тăшманăн 1.700 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ тата çаксăн пек трофейсем тытса илнĕ: самолетсем—25, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—191, бронетранспортерсем—30, хир тупписем — 245, минометсем—50, пулеметсем—106, паровозсем—30, вагонсем—1.665, çар пурлăхĕн складчĕсем—42.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Апрелĕн 8-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 50 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 42 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ХĔРЛĔ ЯЛАВЛА БАЛТИКА ФЛОЧĔН АВИАЦИЙĔ ТĂШМАН КАРАПĔСЕМПЕ ТРАНСПОРЧĔСЕНЕ ПЫРСА ÇАПНИ

Апрелĕн 7-мĕшĕпе 8-мĕшĕнче Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ Пиллау порчĕпе Данциг бухтинче тăшман карапĕсемпе транспорчĕсене пыра-пыра çапнă. Çапла пырса çапса, нимĕçсен пĕтĕмĕшпе 36.000 тонна таякан 9 транспортне, пĕр миноносецне, хуралта çӳрекен 2 карапне тата хăвăрт çӳрекен 2 десант баржине шыва путарнă. Бомбăсем тӳрех пырса лекнипе пĕр крейсера, пĕр миноносеца, пĕр тральщика, 6.000 тонна таякан пĕр транспорта тата 4.000 тонна таякан тепĕр транспорта сиенленĕ.

☆ ☆ ☆

Белоруссири 3-мĕш фронт çарĕсем паян, икĕ кун хушши штурмлана хыççăн, Хĕвелтухăç Пруссин тĕп хулипе крепоçне—Кенигсберга тытса илнĕ. Кенигсберг хулишĕн пынă çапăçусенче совет воинĕсем Хĕрлĕ Çар фашистла немĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешнин историне тата тепĕр чаплă страница çырса хучĕç. Кенигсберг—авалхи пит чаплă крепость. Юлашки çулсенче тăшман ăна татах çирĕплетнĕ, унта хăватлă çар техники питĕ нумай вырнаçтарнă. Крепость артиллерийĕ лартнă йышлă фортсем, тимĕрпе бетонпран тунă темиçе çĕр дот, çĕр айĕпе çӳремелли çулсемпе пĕр-пĕринпе çыхăнса тăраканскерсем, танксене чарма чăвнă канавсем тата пит йышлă хирти укрепленисем хулана пур енчен те хӳтĕлесе тăнă. Кенигсберга немĕç çарĕсем пысăк группировки хӳтĕлесе тăнă, унăн хĕçпăшалпа боеприпассем пит нумай пулнă. Кенигсберг гарнизонне салтак юлмиченех крепоçа панă—юлашки салтак юлмиченех крепоçа хӳтĕлеме хушнă. Эсэсовецсемпе гестаповецсен ятарласа тунă отрячĕсем позицирен хăй ирĕкĕпе каймă е тыткăна парăнма хăтланакан кашни офицера е салтака вырăнтах пере-пере пăрахнă. Артиллери калама çук вăйлă персе тăнине пула, сывлăшран тата çăпăçса туртса илнĕ. Пирĕн çарсем пыра-пыра çапнине тӳсеймен пирки уйăм тĕрекленнĕ пунктсен гарнизонĕсем тыткăна парăнма пуçланă. 5-мĕш А номер форт гарнизонĕ параннă. Тепĕр фортăн гарнизонĕ упăн çурринче пĕтерсе тăкнă хыççăн парăннă. Кĕçех хула цитаделĕ парăннă. Каç пулнă тĕле пирĕн çарсем тăшман хирĕç тăракан юлашки вырăнсене пĕтерсе тăкнă та Кенигсберг хулипе крепоçне пĕтĕмĕшпех тытса илнĕ.

* * *

Братислава хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем Глиновецке тăвĕсем урлă каçнă та Тренчин хули патне—Ваг шывĕн сулахай сыранĕнчи немĕç оборонин тĕрекленнĕ паха пунктне патне тухнă. Кун каçичченех çав участокра гитлеровецсене пĕр батальона яхăн пĕтерсе тăкнă. 750 çынна тытăна илнĕ, вăл шутра—61 офицера. Ваг тата Морава шывĕсем хушшинчи районра тăшман охраннăй батальонсене куçнă тата халăх пурăнакан темиçе пункта çапăçăва кĕртнĕ. Тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере пырса, совет çăвĕсем малалла йышăннă.

Братислава хулинчен хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, çапăçса пырса, Дунай шывĕн çурçĕр енĕ тăрăх Вена патнелле куçса пынă. Малтанах хатĕрлесе хунă позицисемпе усă курса, немĕçсем темиçе хут та контратакăсем тунă. Совет çăвĕсем тăшмана сирсе пăрахнă та халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ, вăл шутра—Вена хулинчен 15 километрта ларакан тĕрекленнĕ пункта Мансдорфа тытса илнĕ.

* * *

Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсем Вена хулин урамĕсенче йăнăçлăн çапăçнă. Кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчен, кăнтăртан, хĕвеланăçĕнчен тата çурçĕр-хĕвеланăçĕнчен пыра-пыра çапакан совет çăвĕсем, тăшман вăйлăн хирĕç тăрса çапăçнине сире-сире пырса, нимĕçсенчен квартал хыçăн квартал тытса тытă илнĕ. Дунай каналĕ хĕррипе куçса пыракан пирĕн çарсем механически завода, газ заводне, хулари радиостанцине, казармăсене тытса илнĕ те уçса пичетлекен предприяти районĕнче çапăçма пуçланă. Хĕвеланăç енчен наступлени туса пыракан гвардеецсен пехотăпа танковăй соединенийĕсем хулан вăтăрăмĕ районне вăркăнса кĕнĕ те Австри столицин центрне йышăннă. Кун каçичченех пынă çапăçусенче тăшманăн темиçе пин салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

Ирĕке каларнă Австри хулисемпе ялĕсенчи халăх Хĕрлĕ Çар çăвĕсене хапăл туса кĕтсе илет. Шаттендорф ялĕнче пурăнакансем совет боецĕсене çăкăн пек саламласа йышăннă: «Сывă пултăр Хĕрлĕ Çар!». Вырăнти учитель Пауль Пинте çапла каланă: «Нимĕç фашисчĕсем, пирĕн çĕршыва оккупацилесе, Австри халăхне вăрçа хутшăнтарчĕç. Ку вăрçăра эпир, Германие поражени тӳстерсе, Австрин ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне каялла тавăрасшăн пултăмăр». Ял сыннисем совет боецĕсене нимĕçсен хĕçпăшалĕпе боеприпасĕсен склачĕн вырăнне кăтартнă. Баумгартен ялĕнчи халăх пĕтĕмпех ялтах юлнă. Томас Мершиц рабочи çапла каласа панă: «Нимĕçсен çар влавĕсем пур сынсене те урăх çĕре куçма хушса пит çирĕп приказ каларчĕç. Апла пулин те, ялтан никам та тухса каймарĕ. Хĕрлĕ Çара эпир гитлерла режимран çăлнăшăн саламлатпăр. Вырăнти священник Мартин Мершиц çапла каланă: «Эпир Хĕрлĕ Çар килессине çав тери кĕтсе татăмăр. Советсен малтанхи часĕсем ял патне çывхарсан, пĕтĕм халăх урамсене тухрĕ. Гитлерла пусмăртан хăтарнă вырăс салтакĕсемпе офицерĕсене эпир çав тери савăнса саламларăмăр». Дойч Кронц ятлă халăх пурăнакан пунктра совет çарĕсем çитиччен икĕ кун малтан паллă мар çынсем вырăнти управа çурчĕ çине Австрин ăшши ялавне çакса янă пулнă.

Çураки умĕн

66 гектар клевер акнă

ÇЕРПӲ, апрелĕн 10-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем клевер акма тытăнчĕç. «Цивильстрой» колхоз 45 гектар, «Красные Тиуши» колхоз—11 гектар, «Красная Армия»—5 гектар, «Балтиец»—5 гектар акнă, районĕпе 66 гектар клевер акнă. Пур колхозсем те акма клевер вăрри çителĕклĕ хатĕрленĕ.

А. ИВАНОВ.

Кĕрхи тырăсен калчисене лайăх пăхса ӳстерер

Республикăри малта пыракан колхозсем, кĕрхи тырăсене çуркуннехи вăхăтра шăнса е çĕрсе пĕтесрен сыхлас ĕçе тĕрĕс организацилесе, тырпул тухăçлăхне палăрмаллах ӳстерççĕ.

Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхоз иртнĕ çул 300 гектара яхăн кĕрхи тырă калчисене апатлантарнă. Етĕрне районĕнчи чылай колхозсем 1944 çулта çуркунне пăрлă вырăнсенче ӳсен-тăрансем патне сывлăш кĕмешкĕн пăра шăтара-шăтара тухнă, шыв пухăнса тăракан вырăнсенче канав алтса шывне юхтарса янă т. ыт. те. Çапла вара вĕсем кĕрхи тырăсене пĕтесрен сыхласа хăварнă. Чурачăк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕ кăçал районра чи малтан вăрлăх участокĕ çинчи калчисене апатлантарма тытăннă.

Кăçал çуркуннехи çаталăк кĕрхи тырăсемшĕн лайăхах мар. Колхоз руководителĕсен, агрономсемпе пĕрле, пăрлă вырăнсенче кĕрхи тырăсене сыхласа хăварас ĕçе халех организацилемелле. Уйăм вырăнсенче юр хулăм пулсан, ăна сапаласа пăрахма тăрăшмалла.

Кашни колхозрах кĕрхи тырă калчисем мĕнлине сăнаса тăмалла. Кĕрхи тырăсене пĕтесрен сыхлас ĕçе кашни колхозрах туса ирттерме пулать. Колхозниксене çак ĕçе вăхăтра мобилизацилени тата кĕрхи тырăсене сыхлас ĕçе пĕлсе туни кирлĕ.

Çак кунсенче Чăваш АССР Совнаркомĕ «1945 çулти çуркуннехи тапхăрта кĕрхи тырăсен калчисене упрамалли мероприятисем çинчен» решени йышăнчĕ, кашни районмĕнле лаптăк çинче кĕрхи тырăсене апатлантармаллине тата сӳрелемеллине кăтартса пачĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕ çĕрĕç органĕсемпе колхозсене çуркунне, чăн малтанах, кĕрхи культурăсен вăрлăх участокĕсене тата кĕрхи тулăсене вырăнти тата минераллă удобренисемпе апатлантарма хушрĕ. Çаван пекех юр айĕнчен имшер тухакан ыраш тата тулă калчисене те апатлантармалла, начар тымарланнă е çĕрме тытăннă калчасемсĕр пуçне, ытти сене пĕтĕмпех сӳрелемелле. Çум курăкĕсем курăнсанах, тасатса тăмалла, уйрăмăнах арăмути курăкĕсенчен хире тасатасси çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла.

Кĕрхи тырăсене çуркунне пăхасси—агротехникăллă паха мероприяти пулса тăрать, ăна лайăх пурнăçласа пыни пысăк тухăçлă тырпул туса илме майпарать. Районсенчи парти, совет тата çĕрĕç органĕсем кĕрхи тырăсене пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе пăнă пуçăнсене те пĕр пăркаламасăр пурнăçласа пыма тивĕçлĕ.

Вăрлăх улăштарса илессине хăвăртлатмалла

СССР Совнаркомĕ «Тĕштырă культурисен вăрлăхĕсене акса тăвас ĕçе лайăхлатассинчен» йышăннă постановлени тăрăх, пирĕн республикăри колхозсен 1945 тата 1946 çулсенче сортлă вăрлăхсем акнă çĕр лаптăкне вăрçăччен пулнă виçене çитермелле. Çак постановление пурнăçлас тесен, каçал пирĕн çурхи тулла, яраша, кĕрхи тулла тата урлана пĕтĕмпех сортлă вăрлăхсемпе акмалла, çаван пекех сортлă вăрлăхсемпе акнă çĕлĕнĕ, вирĕн, пăрçан, ясмăкан лаптăкĕсене те ӳстермелле.

Пирĕн республикăшăн «Диппе» сортлă сĕлĕ, «Лютесценс—062» сортлă кĕрхи тулă, «Винер» сортлă урпа чи лайăх сортсем пулса тăраççĕ. Çак сортсене пирĕн колхозсен вăрлăх участокĕсене акмалла. Анчах та сортсăр вăрлăхсене сортлисемпе улăштарса илесси республикăри колхозсенче ытла та çителĕксĕр пулса пырать. Çуракн вăхăчĕ сывхарса çитрĕ пулсан та, сортлă тырăсем Госсортфонд тата Хатĕрлев пунктĕсенче выртаççĕ. Пирĕн республикăри 24 районра та, колхоз председателĕсем районăпа сортлă вăрлăхсем акма çĕр лаптăкне вăрçăччен виçене çитерессишĕн кĕрешме шутлаççĕ-ши? Сортлă вăрлăхсем аксан кăна пирĕн колхозсем тырпул тухăçне ӳстерме пултараççĕ. Çавна яланах асра тытса, сортсăр вăрлăхсене сортлисемпе улăштарса илес ĕçе çак кунсенчех вĕçлемелле.

А. ФЕДОРОВ.

Районри çĕрĕç пайĕн ĕçĕнчи культурăлăх çинчен

Районри çĕрĕç пайĕ культурăллă, агрономи наукине саракан учреждени пулмалла. Райçĕрĕç пайĕнчи работниксем хăйсен ĕçĕпе кăна мар, ĕçри культурипе те, ĕç вырăнĕпе те лайăх пример кăтартса тăмалла.

Анчах Красноармейски райçĕрĕç пайĕ колхозсемшĕн пример пулса тăраймасть. Çĕрĕç пайĕн çурчĕ район центрĕнчи ытти учрежденисемпе юнашарах. Райçĕрĕç пайĕн çурчĕ умне тытнă картана çĕмĕрсе пĕтернĕ. Канцеляри алăкне чăптапа çапса ăшă каймалла мар тăвас текĕ пулмалла. Анчах алăк çинчи чăпта çĕтĕлсе пĕтнĕ.

Райçĕрĕç пайне пынă çынсем канцеляринне кĕрсен, кирлĕ специалистсене шыраса кашни пӳлĕмех кĕрсе тухаççĕ, е алăкне уçса пăхаççĕ. Мĕншĕн тесен райçĕрĕç пайĕнче хăш специалист хăш пӳлĕмре ĕçленине çырса çапман.

Колхоз председателĕсем райçĕрĕç пайне пырсан, вĕсем унта тасалăх, культура курмалла, типтерлĕ, йĕркеллĕ каласакан специалистсемпе тĕл пулмалла. Паллах, çаван пек пулсан, колхоз председателĕн ялхуçалăх специалисчĕсене хаклас, вĕсене юратас кăмăл ӳсет. Анчах та Красноармейски райçĕрĕç пайĕнче ĕçсем апла мар. Пӳлĕмсенче таса мар, стенасем çинчи штукатурка ишĕлсе дăрать, урайсем шăтăк, кăмакăсем урăлса кайнă, кăмака çăварĕсем пурте ишĕлсе аннă. Пыракан çынна малтанах çак «пĕчĕк» çитменлĕхсем курăнаççĕ. Коридора пырса кĕрсен, сылтăм енчи пӳлĕмре главнăй агроном, землеустроитель тата ытти агрономсем те лараççĕ. Алăк шăтăк-çурăкланса пĕтнĕ, уçсанах хăрах енне чалăшса каять те, çĕклемесĕр хупăнмасть. Пӳлĕме çынсем пырсан, ним-та та ларма çук пирки, специалистсем ĕçлекен сĕтел çине таянаççĕ е тата арча çине лараççĕ.

Главнăй агроном кабинетĕнче 7 çын вырнаçнă. Паллах, вырăн çитмест: пĕр сĕтел умĕнче ик-виçĕ агроном ĕçлесе лараççĕ. Пĕр агрономĕ патне колхозран калама пырсан, икĕ çын каласшинне 5 çынĕ ĕçе парахсах итлеççĕ. Çав вăхăтрах райçĕрĕç пайĕн çуртĕнче икĕ пушă пӳлĕм пур.

Паллах ĕнтĕ, райçĕрĕç пайĕнче культура сахал пулсан, колхоз председателĕсен унта пырас кăмăлĕ сахалтарах пулать. Чăнах та, колхоз председателĕсем район пысăк нумайĕшĕ райсовет исполкомне, ВКП(б) райкомне кĕреççĕ те, райçĕрĕç пайне кĕмесĕрех каяççĕ. Çакă райçĕрĕç пайĕн ĕçĕнчи культурлăха ӳстерме кирли çинчен калать.

Учрежденире культурлăх пулни унти работниксен авторитетне те хăпартать. Унта пыракансем йĕри тавра тасалăх пурринне курсан, хăйсене тăп-тăпрах, культурлă тытаççĕ.

Красноармейски районри колхозсенче культурăллă канцелярисем сахал мар. «Красное Сормово», «Красная звезда», «Сила», «Красный Борденер» тата ытти колхозсен канцелярийĕсенче таса, культурăллă. «Красное Сормово» колхозра колхоз председателĕн Т. Осипов юлташăн кабинетĕнче чечексем, занавескăсем, пепельницăсем пур. Счетоводла учетчик валли уйрăм пӳлĕмсем туса панă. Урайне яланах çуса тăраççĕ. «Красная звезда» колхозра (председателĕ Иванов) канцеляри таса, сутă, пӳлĕмсен алăкĕсене лайăх краскăсемпе сăрланă. «Красный Борденер» колхозăн канцеляринче фикуссем тата ытти илемлĕ чечексем лартса ӳстернĕ. Канцеляринче табак туртмаççĕ. Асăннă колхозсем государство умĕнчи парăмсене те срокра пурнăçланă. Акмалли вăрлăхсене те, ытти кирлĕ ĕçхатĕрсене те тахçанах хатĕрлесе çитернĕ.

Паллах, Красноармейски райçĕрĕç пайĕ хăйĕн çуртĕнче культурлăх туса хумасăр, колхоз председателĕсене ĕçре культурăллă пулмалли çинчен калама пултараймасть.

Райçĕрĕç пайĕн агрономĕсем колхозсене кайсан колхозниксем хушшинче мĕнле те пулин кирлĕ темăпа докладсем, калаçусем туса ирттермеççĕ. Колхоз канцеляринче ларсах сведенисем илеççĕ те е кăтартусем паркаласçĕ те тухса каяççĕ. Хăйсен специалист авторитетне ӳстерес, колхозсене вăйлă тырпул туса илме вĕрентес енĕпе çитĕлĕксĕр ĕçлеççĕ.

С. ШАДИН,
(Хамăр корр.).

Лаша çуранин ăнăçлăхне татса парать

Кашни колхозникпе колхозница лашасене куç шăрçине сыхланă пек сыхласа усрама тăрăштăр!

Лашасене юратса пăхнă çĕрте

Тимофей Григорьев юлташа Чатукасси çынниçем кăна мар, кӳршĕри колхозсен членĕçĕм те лайăх пĕлеççĕ.

Тимахви пичче чăнах та хăйĕн ырă ĕçĕ-ле мухтава тивĕçлĕ. Вăл вуникĕ çул хушши ĕнтĕ пĕр улшăнмасăр Красноармейски районри «Труженик» ялхуçалăх артелĕнче конюх пулса ĕçлет.

Хăйне шанса панă лашасене вăл юратса пăхать. Çавăнпа та унăн лашисем таса та мăнтăр.

Колхоза çирĕп лашасем çитĕнтерсе парас тесе, вăл ырми-канми ĕçлет. Юлашки икĕ çул хушшинче кăна Григорьев юлташ пăхнă тăватă лаша фронта юрăхлă пулнă. Вăл пăхакан «Герой» лашана—артиллери часĕне, «Кера» ятлă лашана—утлă çара илнĕ. Вуникĕ çул хушшинче Тимахви пичче Хĕрлĕ Çар валли вăтăр тиха çитĕнтерсе панă. Вăл пăхакан лашасенчен хăм пăрахни те, вилни те пулмен. Çакăнпа та колхоз правленийĕ темиçе хутчен те хаклă премисем панă, ĕçкунĕ çумне хушса тӳленнĕ.

Çураки çывхарнă май, Тимахви пичче лашасене канма тăратнă. Халĕ ĕнтĕ вăл витерен тухма та пĕлмест. Пĕрмаях лашасен таврашĕнче ĕçлет. Васене тăрантарать, тасатать, вăхăтра уçăлма кăларать.

Григорьев юлташ халĕ 6 лаша тата 3 вăкăр пăхать. Вăл пăхакан лашасем те, вăкăрсем те çуракине тухма юрăхлă.

Валентин УРДАШ.

15 çул хушши конюхра

ИШЛЕЙ. (Хамăр корр.). «Коммунист» колхозра 1930 çултанпа А. Ефремов колхозник конюхра ĕçлет. Çав вăхăт хушшинче А. Ефремов юлташ лашасене мĕнле пăхмаллине лайăх вĕренсе çитнĕ. Вăл лашасене юратса, машăн лашан хăйĕн уйрăлăхне пĕлсе пăхать. Вăл пăхакан лашасем ялтах таса та мăнтăр.

Ку колхозра лашасене ездовойсем çумне çирĕплетнĕ. Лашасене ĕçе парса янă чухне конюх Ефремов тĕрĕслесе парса ярать, ĕçрен таврăнсан та тĕрĕслесе йышăнать. Колхозра лашасене пăсни пулман.

А. Ефремова темиçе хутчен те премипанă.

В. ГУСЬКОВ.

Чуптару кампанине лайăх ирттерер

1944 çулта кĕрсесене чуптармалли кампанине лайăх хатĕрленсе ирттермен пирки, хăмлама пултаракан кĕрсесемех нумай хĕсĕр юлнă. Хĕрлĕ Чутай тата Первомайски районсенче мĕнпур кĕрсесенчен 78 процентне, Комсомольски районри колхозсенче 87 процентне кăна чуптарнă. Иртнĕ çул республикăри колхозсенче чуптарнă кĕрсесенчен 52,5 процентĕ кăна пĕтĕленнĕ. Пĕтĕленнĕ кĕрсесен шучĕ Канаш, Пăрачкав, Вăрмар районĕсенче уйрăмах сахал пулнă, унта кĕрсесен 34—36 процентĕ кăна пĕтĕленсе юлнă.

Чуптарнă кĕрсесем пĕтĕленменни, чăн-чăн малтанах, чылай колхозсем зоотехника правилисене пурнăçа кĕртсе пыманнинчен килет. Кĕрсесем хăмлама пултарнине тата ăйăрсен пахалăхне нумай колхозсенче тĕрĕслемен. Ăйăрсем валли çителĕклĕ фураж уйăрман. Канаш, Мурказ, Ишлей, Пăрачкав районĕсенчи колхозсем вара, чуптару кампани вăхăтĕнчех ăйăрсемпе тĕрлĕ ĕçре усă курса, вĕсене вăйсăрлатнă.

Кĕрсесене чуптарас ĕç пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл лашасен шучĕпе пахалăхне ӳстерме пулăшать. Çавăнпа та кăçал хăмлама пултаракан кашни кĕрсенех чуптарса хăвармалла. Колхозсемпе совхозсенчи, хуçалăх организацийĕсенчи 3 çултан иртнĕ кĕрсене халех ветеринарипе зоотехникăна енчен пăхса тухмалла. Хăмлама пултарайман кĕрсесем тĕлĕшпе, вĕсем юрăхсăрринне кăтартса, акт çырмалла. Актсене районсовет исполкомĕн ларăвĕсенче пăхса тухса, çирĕплетме Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарнатне ямалла.

Ăйăрсем юрăхлине те халех тĕрĕслесе тухмалла. Ырхан ӳт-пӳллĕ ăйăрсене лайăх апатлантарма, тĕрĕс пăхма тытăнмалла. Малашне вара вĕсене кашни уйăхра пĕр хутран кая мар тĕрĕслемелле.

Ырханланнă е чирлĕ кĕрсесене халех пур тĕрлĕ ĕçрен те хăтармалла та пикесех сыватма тытăнмалла. Вăйланса, лайăх ӳт-пӳленсе çитиччен вĕсемпе ĕçре усă курма пачах чармалла.

Чуптару пункчĕсен заведующийĕсемпе старши конюхсене чуптару техникине вĕренмелли кĕске вăхăтлăх курссенче вĕрентсе кăларман пулсан, ку ĕçе халех туса ирттермелле.

Пĕр йăхри ăйăрсемпе усă курассине чарас майпа тата паха ăйăрсемпе янлăн усă курас шутпа, лайăх ăйăрсене пĕр колхозран тепĕр колхоза ямалла.

Çĕрĕç органĕсен, колхоз правленийĕсен, совхоз директорĕсен, государство учрежденийĕсемпе предприяти руководителĕсен чуптару ĕçне лайăх организацилессишĕн тăрăшмалла, чуптару вăхăтĕнче çитерме кашни ăйăр пуçне 8—9 центнер утă тата 4—5 центнер тĕштырă уйăрмалла.

Хĕсĕр юлнă е хăмлана кĕрсесене майăч 15-мĕшĕнчен тепĕр хут ăйăрпа искусственнăй майпа пĕтĕлентермелле. Çавăнпа та ĕнтĕ кĕрсесене тăтăшах сăнаса тăмалла.

Райсовет исполкомĕсен мартăн 25-мĕшĕ тĕлнех чуптару пункчĕсене тата искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли пунктсене пăхса тухса çирĕплетмелле пулнă. Çакна халиччен те туман пулсан, ăна халех туса çитермелле. Çав пунктсем çумне ăйăрсене тата кĕрсесене çирĕплетмелле.

Чăваш АССР Совнаркомĕ Çĕрĕç Халăх Комиссарнатне, район тата хула Совечĕсен исполкомĕсене ăратлă ăйăрсене, вĕсем камăн пулнине пăхмасăрах, чуптарурра усă курма нрĕк панă. Паха ăйăрсемпе туллин усă курас шутпа, 1945 çулта Вăрнарта, Калининăра, Куславккара, Мурказра, Вăмарта, Шăхасанта тата Етĕрнере—пурĕ 7 вырăнта кĕрсесене искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли пункт организацилеме йышăннă. Çав пунктсенчен кашни 100 кĕсререн кая мар пĕтĕлентермелле.

Ăйăрсемпе лайăхрах усă курас тесен, вĕсемпе тĕрлĕ ĕçре ĕçлеме тата инçе çула кайма чармалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕ колхоз председателĕсене, организацисемпе предприятисен руководителĕсене вĕсем чуптару кампанине лайăх тата вăхăтра ирттерессишĕн ответлă пулса тăни çинчен хыта асăрхатарнă.

ÇУРАКИ ВĂХĂТĔНЧИ АГИТАЦИПЕ ПРОПАГАНДА ЫЙТĂВĔСЕМПЕ ПУЛСА ИРТНĔ КАНАШЛУ

Çак кунсенче Шупашкарта 1945 çулхи çураки вăхăтĕнче агитацине пропаганда ĕçне туса пырас ыйтупа республикăри канашлу пулса иртрĕ. Канашлура ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен пропагандăпа агитаци отделĕсен заведующийĕсем, парткабинетсен заведующийĕсемпе райхаçатсен редакторĕсем пулчĕç.

Канашлура пулнисем ВКП(б) Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ А. Вишняков юлташ çураки вăхăтĕнчи агитацине пропаганда задачисем çинчен тунă доклада тата ВКП(б) Тăвай райкомĕн агитацине пропаганда отделĕн заведующийĕ Михайлов, Красноармейски районри хаçат редакторĕ Хатаевский юлташсен содокладченĕсене итлесе сӳтсе-явăрçĕ.

Докладсем тăрăх пренире 14 çын тухса каларĕç.

Канашлура массăллă-политикăллă тата пропаганда ĕçĕнче, районри пичет ĕçĕнче пулнă çитменлĕхсене палăртрĕç.

Канашлу хыççăн семинар пулчĕ. Семинар участникĕсем çак темăсемпе докладсем итлерĕç. «Агитколлективсене йĕркелесси, агитаторсене уйăрса илесси тата воспитани парасси», «Районри хаçатсен çуракине хатĕрленсе ирттернĕ вăхăтри задачисем», «МТС-сенчи массăллă-политикăллă ĕç», «Ялти çутĕç учрежденисен çураки вăхăтĕнчи задачисем», «Ĕçсыннисене кино кăтартасси», «Халăх хушшинчи политикăллă докладсем тата наукăпа çутĕç пропаганди», «Вырăнти радиовещанин задачисем», «Коммунистсен политикăллă вĕренĕвне организацилесси», «Парткабинетсен çураки вăхăтĕнчи ĕçĕсем», «1945 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ». Çак ыйтусемпе ВКП(б) Обкомĕн ответлă работникĕсем докладсем туса пачĕç. Вĕсемсĕр пуçне ялхуçалăх институчĕн научнăй работникĕсем «Колхозсемпе МТС-сенче çураки ĕçне мĕнле организацилемелли çинчен» тата «Çураки ĕçĕсен агротехники çинчен» докладсем туса пачĕç.

Семинар участникĕсемпе ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ И. Чарыков юлташ калаçрĕ. Чарыков юлташ парти организацийĕсен агитацине пропаганда ĕçĕнче пулакан çитменлĕхĕсем çинчен тата çак ĕçри черетри задачăсем çинчен тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Агитацине пропаганда ĕçĕнчи çитменлĕхсенчен пĕри вăл—формализм пулса тăнине, ертерганизацисем массăллă-политикăллă ĕçĕн пахалăхне тата идейăпа политикăллă содержанине çителĕксĕр тĕрĕслесе тăнине палăртрĕ. Парти организацийĕсен хăшĕпĕр руководителĕсем, çавăн пекех пропагандăпа агитаци отделĕсем те агитацине пропаганда ĕçĕн кашни пĕчĕк ыйтăвĕсемпех интереслемеççĕ, пĕтĕмĕшле задачăсене кăтартса панипех лаплanaççĕ. Хăшĕпĕр районсенче пропагандăпа пичет работникĕсене вĕсен тĕп ĕçĕнчен уйăраççĕ, вĕсене ял Советчĕсемпе колхозсенчи уполномоченнăйсем туса чылай вăхăта ярасçĕ. Агитацине пропаганда ĕçне лайăхлатмалла. Çак ĕçре парти-типе совет тата комсомол активĕпе, интеллигенци вăйĕпе ытларах усă курмалла.

КОЛХОЗСЕНЧИ ВИНОГРАДНИКСЕМ

Мичурин ячĕпе тăракан генетика тĕп лабораторийĕ сивве тӳсме пултаракан виноградăн çĕре лартмалли 100 пин туратне хатĕрлеме заказ илнĕ. Вĕсене кăçалхи çул пирвайхи хут виноград ĕрчетме пуçлакан облаçсене ямалла.

Приморски край, Пенза, Тамбов, Воронеж тата ытти облаçсенчи колхозсем те виноградниксем тума хатĕрленеççĕ.

Совет Союзĕн вăтам райĕнчĕсенче сивве тӳсме пултаракан Мичурин сорчĕсемсĕр пуçне, ир пулакан Европăри сортсене те ĕрчетме хатĕрленеççĕ.

Колхозсем валли чи лайăх сортсем хатĕрлеме питомниксем тăваççĕ. (ТАСС).

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицийлĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: апрелĕн 8-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем Германин 30 хулинпе ялне туртса илнĕ. Меппен районĕнче нимĕçсем хирĕç тăракан пĕртен-пĕр участок пулса тăрать. Союзниксем Фререн хулинчен хĕвелтухăçнерехре тата Дюммер кӳлленчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре малалла кайнă.

Мюльхаузен хули сывăхĕнче нимĕçсем 16 танк пулăшнипе контратака тунă. Союзниксем 9 танка çĕмĕрсе тăкнă, 500 çынна, урăхла каласан—нимĕçсен çапăçура пулнă салтакĕсен çуррине яхăн, вĕлернĕ е тыткăна илнĕ.

Нейнинген хулинчен кăнтăртарахра союзниксен пехотнăй тата танковăй часĕсем хĕвелтухăç еннелле 24 километр таран кайнă та Кенигсхофен хули патне пырса тухнă.

Вюрцбург хулинчен хĕвелтухăçнерехре союзниксем Майн шывĕн хĕвелăнăç хӳрине 19 километр тăршшĕнче тăшмантан тасатнă.

Рур «миххин» çурçĕр флангĕнче союзниксем Рейнпа Герне каналĕ çинче хăйсен укрепленине аслăлатнă.

ЛОНДОН, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин союзниксен экспедицийлĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ çумĕнчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, американецсен 9-мĕш çарĕн часĕсем 40 километр малалла кайнă. Ганновер хулине пырса кĕресси 6 километр çурă кăна юлнă. Ку хулана виçĕ енчен çавăрса илнĕ. Американецсен 9-мĕш çарĕн ытти часĕсем Брауншвейга çитесси 32 километр юлнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 9-мĕшĕ, (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 9-мĕше ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен 900 бомбардировщикĕ ытла шыв айĕнче çӳрекен кимĕсен Гамбургри верфĕсене тата Лейпциг хулинчен темиçе километр хĕвеланăçнерехре вырнаçса ларнă синтетически горючи заводне тапăннă. Çавăн пекех тата Берлин çине те бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин американецсен Европăри стратегиллĕ сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ çумĕнчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 9-мĕшĕнче американецсен 8-мĕш сывлăш-çар корпусĕнче тăракан «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши 1.250 бомбардировщикне яхăн Мюнхен районĕнчи 10 аэродрома, нефтехранилищене тата сирпĕтсе яракан япаласен складне тапăннă. Çав бомбардировщиксене «Мустанг» тата «Сандерболт» йышши 750 истребитель ытла хӳтĕлесе пынă.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави çарĕн генералăнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Боснире Сараево хулине ирĕке кăларнă хыççăн Югослави часĕсем пĕр-пĕринчен уйăрăлса кайса çурçĕрелле таракан нимĕç часĕсен юлашкийĕсене хăваласа пыраççĕ. Брчко—Добойран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Югослави çарĕсем Босно шывĕн улăхĕ еннелле сарлака фронтпа куçса пыраççĕ. Тăшманăн тĕреклетнĕ пункчĕсене нумай пĕтерсе тăхнă. Югослави çарĕсем Брчко хулине кĕрсе кайнă, унта халь урамсенче вăйăн çапăçаççĕ.

Ликра Югослави часĕсем, наступлени туса пырса, Оточац хулине ирĕке кăларнă.

Югослави авиацийĕ, çĕр çинчи çарсене пулăшса, тăшман тылĕнчи пунктсене тата унăн çулйĕрĕсене пыра-пыра тапăннă.

Совет Союзĕпе Турци хушшинчи договора пăрахăçа кăларасси çинчен Совет Правительстви пĕлтерни çине Турции правительстви пачă ответ

АНКАРА, апрелĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Анатоли агентстви çапла пĕлтерет: Совет Союзĕпе Турци 1925 çулхи декабрĕн 17-мĕшĕнче тунă договора пăрахăçа кăларасси çинчен Совет Союзĕ пĕлтерни çине ответлесе, Турци правительстви Совет Правительствине деклараци çырса панă. Вăл декларацие 1945 çулхи апрелĕн 4-мĕшĕнче ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Хасан Сака Совет Союзĕн Турцири Посолне Виноградова панă. Унта çапла каланă: Турци правительстви тахçантанпах Совет Союзĕпе туслăн та килĕштерсе пурăнма тăрăшнă. Вăл 1925 çулхи декабрĕн 17-мĕшĕнче тунă договора. Турцине Совет Союзĕ хушшинчи туслăха чылай пулăшăскере, пысăк вырăна хуни çинчен пĕлтересшĕн. Вăл тата Совет Правительстви çав договора пăрахăçа кăларма шутланине шута илет. Срок тухакан договора урăх доворпа, Турцине Совет Союзĕн халăхи интересĕсемпе килĕшсе тăракан нумай лайăхлатнă договорпа улăштарма Совет Правительстви сĕннĕ тăрăх, Турци правительстви çак ыйтупа хăйне парас сĕнӳсене ырă кăмăлпа тата тимлĕн пăхса тухма хатĕрри çинчен пĕлтернĕ».

ПĔРЛЕШӲЛЛЕ НАЦИСЕН ЮРИСЧĔСЕН КОМИТЕЧĔН ЛАРАВĔ УÇАЛНА

ВАШИНГТОН, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери хăрушсăрлăх организацийĕ çумĕнчи пĕтĕм тĕнчери судăн статучĕн проектне хатĕрлеме Пĕрлешӳллĕ нацисен юрисчĕсен комитечĕн канашлăвĕ уçалнă. Канашлура Пĕрлешӳллĕ нацисен 38 çĕршывĕнчи представительĕсем пур, вĕсен шутĕнче—Совет Союзĕн представительĕсем Новиков, Крылов тата Голунский юлташсем.

Канашлу уçалнă чухне США-н государство секретарĕ Стеттиниус сăмах тухса калаçнă.

РУМЫНИРЕ ЛЕГИОНЕРСЕНЕ ТАТА ФАШИСТСЕМ МАЙЛА ĔÇЛЕНЕ ÇЫНСЕН АРЕСТЛЕНИ

БУХАРЕСТ, апрелĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем ĕнер легионерсен тата фашистсем майлă ĕçленĕ çынсен пурĕ 94 çынăн списокне, шалти ĕçсен министрĕ хушнă тăрăх Каракал лагерьне хупнăскерсен списокне пичетлесе кăларнă.

ФИНЛЯНДИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРАНТАН ТУХНА

ХЕЛЬСИНКИ, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Финлянди премьер-министрĕ Паасикиви хăйĕн правительстви вырăнтан тухăсси çинчен президента заявлени панă. Президент правительство членĕсене çĕнĕ правительство туса хурiччен хăйсен вырăнĕсенче юлма чĕнĕ.

ЯПОНИРЕ ÇЕНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТУСА ХУНА

ТОКИО, апрелĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Судзуки адмирал паян çĕнĕ правительство туса хунă.

Çĕнĕ правительствăна çаксем кĕнĕ: премьер-министр, вăлах ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ тата Хĕвелтухăç Азин ĕçĕсен министрĕ—Контаро Судзуки адмирал; шалти ĕçсен министрĕ—Генки Абэ, çар министрĕ—Корецика Анами генерал; тинĕс министрĕ—Мицумаса Йонаи адмирал тата ытти çем те.

СУДЗУКИ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЧЕ ТОГОНА ЮТ ÇЕРШЫВ ĔÇЕСЕН МИНИСТРĔ ТУСА ХУНА

ТОКИО, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Домэй Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Японин информаци бюровĕ паян Сигенори Тогона ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулма тата Хĕвелтухăç Азин ĕçĕсен министрĕ пулма уйăрса лартни çинчен пĕлтернĕ.

Пĕчĕк фельетон

Иван Петрович Томилкин хӳрешки

Ытлашши пумай каласа тăмасăрах, нумайлакансене малтан Иван Петрович Томилкинпа паллаштарар. Щедрин унăн профессийĕ çинчен уçăмлăнах каласа хăварман. Тӳррине каласан, пире унăн профессийĕ халĕ интереслентермест те. Пире, пурин-чен ытла, Томилкинăн тĕрлĕ утлава ĕçĕсе-наса килеççĕ. Унăн пурнăçĕнче пĕр тĕллев кăна пулнă: кашни утăм ярса пусмăсе-ренех, камран та пулин, мĕнле те пулин укçа сăптарса илмелле. Çак шутпа вара вăл кама хăратм кама ултăлама, кама йăпăлтатма, кама хирĕçтерме, кама сăмах пама тăрăшнă, пĕр сăмахпа калаçан, нимĕн умĕнче те чарăнса тăман.

Паллă ĕнтĕ, Томилкинсен самани саланса кайнăранпа нумай вăхăт иртрĕ. Анчах, шел пулин те, Томилкинсен хӳрешкисем халĕ те сайра хутран тĕл пулаççĕ иккен-ха. Çавăн пек пĕр хӳрешкене эпир Шупашкарта «Сельэлектро» кантурĕнче тупрăмăр.

Электротехникăна пĕлекенсем трансформатор мĕн иккенне лайăх чухлаççĕ. Трансформатор вăл—пирĕн колхозсенчи электростанцисемшĕн калама сук паха япала. Унсăр электростанцисем ĕçлеме пултараймаççĕ, тесе вĕрентеççĕ пĕлекен çынсем. Çак паха япалана вара колхозсем «Сельэлектро» кантурĕ урлă кăна туянма пултараççĕ. Каламасăрах палла, пирĕн колхозсем ытларах электростанцисем лартасси çӳлте асăннă контуртан та чылай килет.

Анчах çак кантурăн пуçлăхĕ Андреев урăхла шутлать. Унăн шучĕпе, çак кантурта трансформатора колхозсен пурнăçне юсама мар, Андреевăн пурнăçне юсама шутласа кăларнă. Апла пулсан, вĕсемпе май килнĕ таранах усă курас пулать ĕнтĕ. Чăнах та, Андреев вĕсемпе май килнĕ таран çеç мар, ытлашшипех те усă курать.

Закон хушнă тăрăх, паллах, ун пек тума юрамасть. Анчах, ваттисем калашле, хăшпĕр çынсемшĕн закон çырман, Андреев та законсене хисеплеме маннă пулмалла. Вăл; государство кăсăничен укçа илсе тăнине пĕрлех, хăйĕн вăрăм аллисене колхозсен пӳлминелле те тăсать. Калăпăр, колхоз электростанци лартма шутланă. Ана трансформатор тата ытти япаласем кирлĕ. Çав япаласем шăпах ĕнтĕ Андреев аллинче. «Тырă паратăн—трансформатор паратăн», тет сана вăл, çав япалана государство хакĕпе парас вырăнне. Çапла майпа Андреев иртнĕ çулта пĕр Красноармейски районри 3—4 колхозран кăна хăйне валли 21 центнер çĕрулмипе пахча-çимĕçсем, 6 центнера яхăн тулă тата ытти тĕштырăсем, 28 килограмм пыл, 6 килограмм çу тата ытти çимĕçсем те нумай илнĕ. Кусене илнă Андреевшăн сахалтарах пек туйăннă пулас, вăл тата 33 килограмм туртакан сыснă та илсе пăхнă. Анчах çак мĕнпур пурлăхшăн вăл колхозсене пĕр пус та укçа тӳлемен. Уйрăмах вăл Красноармейски районри «Четай» колхоз председательне, колхоз тырпулне çămăлланах унта-кунта пама юратаканскере. Хытă улталанă. Трансформатор пама пӳлнă та пачĕ-пачĕпех çĕрулми, купăста, çăнăх, пăрçа, пыл тата ытти-не те илсе тухса кайнă. Анчах колхоз халĕ те трансформатор туянаймасть-ха.

Эпир кунта Андреев йĕрпе çӳресе пур районсене те çитесшĕн мар. Çапах та каласа хăварас пулать: Андреев Калинино тата ытти районсенчи колхозсен амбарĕсемпе нӳхрепĕсене те кĕре-кĕре тухнă.

Пĕрре алă кукăрăлсан, ăна тӳрлетме йывăр, теççĕ. Андреевăн кукăр алли урăх çĕрелле те туртăнать. Çапла, Çĕрпӳри электростанци сиенленсен, ăна юсама йывăç турттармалла пулнă. Çак майпа усă курса, Андреев 2.000 килограмм бензин илнĕ. Мĕн-ха вара? 500 килограмĕ тивĕçлĕ çĕре кайнă, ытти бензинĕ Андреев килĕнче «типсе» пĕтнĕ.

Çӳлте асăннă Томилкин, Андреев ĕçĕсене курса: «Пăх-ха эсĕ, манран та ирттерер ку», тенĕ пулĕччĕ. Анчах çакна асра тытас пулать: пирĕн вăхăтра Томилкинсене часах хăйсен тивĕçлĕ вырăнне тупса параççĕ. Ку хутĕнче те çаплах пулĕ тесе, эпир шансах тăратпăр.

* * *

Сăмах майĕн, колхозсенче электростанцисем лартас ĕç çинчен чарăнса тăмалла. Пирĕн республикăра юханшывсем 30 ытла шутланаççĕ: Аслă Çавал, Кĕçĕн Çавал, Рыкша, Ункă, Шетмĕ, Сурăм, Аслă Пăла, Кĕçĕн Пăла, Улхаш тата ыттисем те. Çак шывсем çинче 200 ытла шыв арманĕ ĕçлет. Ĕçе пĕлсе тата тăрăшса организацилесен, республикăри колхозсем 100 ытла электростанци лартма пултараççĕ. Вăл станцисем çĕршер колхоза, пиншер колхозниксен килĕсене çутатма пултараççĕ.

Çапла тăвас тесен, паллах, «Сельэлектро» кантурĕнчен Томилкин хӳрешкисене тасатни пите кирлĕ пулать.

В. СЕМЕНОВ,
В. АКЧЕЛЬ.

Ответла редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Военторгăн строительство участокне плотниксем, кăмака тăвакансем, стеларсем кирлĕ. Ĕçукçи—калаçса татăлна тăрăх. Уйрăм списокла апатлантараççĕ. Общежитие вырнаçтараççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, ул. Ленина, 2. Военторг.

Мухтавлă конюх Пайманов

Николай Никитич Пайманов сăпайлă та нумайăх калаçма юратман çын. Унпа сывăхарах паллашсан, вăл хăй ĕмĕрĕнче нумай хура-шур курнине туйса илетĕн. Николай Никитич çамрăк, вăйпитти чухне нимĕçсемпе те, ытти тăшманпа та çапăçнă. Окопри пурнăçа вăл лайăх пĕлет. вăрçă хирĕнче вăл вилĕмпе темиçе хутчен те куçа-куçăн тĕл пулнă. Çавăнпа та час-часах вăл:

— Пирĕн кунта вăя шеллемесĕр ĕçлемелле, хаяр вăрçă пынине асра тытмалла, — тесе асăрхаттарать. Тăван çĕршыва чунчĕрен юратни, тăшмана хаярран курайманни ăна ĕçре вăй парать. Вăл, ватă пулсан та, çамрăксенчен юлмастъ.

Пайманов юлташ ачисене те мухтава тивĕçлĕ пăхса çитĕнтернĕ. Вĕсемшĕн ăна никам умĕнче те хĕрелме тивмест. Пĕр ывăлĕ, Евгений, Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпах фронтра, тăшмана хирĕç çапăçать. Вăл лейтенант. Тепĕр ывăлĕ, Сергей, Кипечкасси ял Совечĕн председателĕ. Вăл ертсе пыракан ял Совечĕ пур тĕлĕшпе те яланах малта. Хĕрĕ, Ольга, вăрçă пынă вăхăтра трактортпа ĕçлеме вĕреннĕ, вăл—трактористка-стахановка.

Анчах Николай Никитич хăйĕн ачисемпе кăна мар, ĕçĕпе те чапа тухнă. Вăл хăйĕн ĕçне чĕререн юратса туса пырать. Унăн кăкăрĕ çинче СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн «Отличник социалистического сельского хозяйства» ятлă значок куранса тăрать.

— Эпĕ конюх. Манăн специальноçа никăш институтра та вĕрентмеççĕ, çапах та, лайăх конюх пулас тесен, ĕненĕр мана, 66 çула кайнă ват çынна, нумай пĕлес пулать тата пурнăç спычĕ те пысăк пулмалла, — тет Николай Никитич.

Пайманов конюх пулса ĕçлекен «Большевик» колхоз пысăках мар. Унта пурĕ

33 лаша. Çав лашасене вĕсем тăваттăн пăхаççĕ. Николай Никитич конюх пулса ĕçлеме тытăннăранпа 14 çул çитет. Пайманов витерен талăкра пурĕ те 2—3 сехетлĕхе кăна уйăралать. Колхозра—8 кĕрсе, 2 ăйăр. Лаша вăйĕ çителĕклĕ пулсан та, кунта 6 вăкăра кӳлсе ĕçлеме вĕрентнĕ. Конюхсем хăйсен ĕçне юратнине тата ответлăха туйса ĕçленине кашни çын витере пулсан е колхоз лашисене курсан, часах туйса илет.

Лашасем валли апат çителĕклĕ. Анчах та кунта, лаша апачĕ нумай тесе, ăна вилĕсĕр тыткаламаççĕ. Лашасене апат пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн те час-час параççĕ. Колхозăн çарапĕ нумай мар, пурĕ те 26 гектар кăна. Анчах утă çителĕклĕ, мĕншĕн тесен кунта утта перекетлĕн тытăналаççĕ, тислĕк çине ямаççĕ.

Колхоз правленийĕ, хура кĕркуннеренех лаша апатне вилсе, акт тăрăх Пайманов юлташăн аллине панă. Кашни лаша пуçне 34 центнер утă, тăтăшах тăрантарма кунпе 2-шер килограмм сĕлĕ е ытти тĕштырă уйăрнă, сĕткенлĕ апат (çĕрулми, силос) пур. Çуртырри уламĕ те çителĕклĕ.

Кунта лашасене мĕнле пăхмаллине лайăх пĕлеççĕ, пурне те пĕр пек, пĕр тĕрлĕ апат çитермеççĕ. Яланах йывăр ĕçре пулакан лашасене, сĕлĕ-утăсăр пуçне, çĕрулми пĕçерсе параççĕ. Пĕтĕ кĕрсесене кунне 0,5 килограмм шăтарнă тĕштырă параççĕ.

— Çакă вăл кĕрсесен организмне çирĕплетет,—тет Пайманов юлташ. Кашни кунах лашасене 2—3 хутчен шăвараççĕ, тасатсах тăраççĕ. Урисене, уйрăмăнах чĕрнисене, кашни кун тенĕ пекех тĕрĕслеççĕ, тасатаççĕ. Çапла вара колхоз лашисем пурте мăнтăр, начаррисем е суранланнисем çук тата пулман та.

Николай Никитич хăех шорник. Кашни лашан хăмăтсемпе ĕнерчĕксем тата ытти ут таврашĕсем çителĕклĕ те юсавлă.

— Лаша самăр та сывă пуласси пĕр конюхсенчен кăна килмест, кунта лашасемпе сӳрекенсем те пысăк вырăн йышăнаççĕ, — тет Пайманов юлташ.

Конюхпа ездовой хушшинче туслăх кирлĕ, ездовой та лашана конюх пекех юратмалла. Лаша çине чунсăрран пăхакана кăна та лашапа ĕçлеме уйăрман. Кашни лашана ездовой çумне пĕлсе çирĕплетнĕ. Пайманов юлташ лашана ездовой аллине париччен çав лашапа ăста тата мĕн тума каяссине, мĕн чухлĕ тиессине е пушăлла нумай вăхăтлăха е ĕçĕске сроклăха каяссине лайăх ыйтса пĕлет. Кирлĕ пулсан, çула каякана утă е сĕлĕ парса ярать. Анчах яланах хыта çӳремелле маррине, лашана час-часах кантарма кирлине, хăш вăхăтра çитермеллине тата шăвармаллине асăрхаттарса ярать. Лаша çултан тавăрăнассăн, Николай Никитич лаша сывлăхне тĕрĕслет, ăна тасатать, вăл чирлĕ лашасем хушшинче пулнипе пулманни çинчен ыйтса пĕлет. Колхозра лаша ывăнни е чирлесе вилни халиччен пулман.

— Уйрăм колхозченче,—тет Пайманов юлташ.—эпĕ хам çăнăх çăрăх, конюхпа ездовой пĕр-пĕринпе килĕшсе ĕçлени çителĕксĕр. Конюхĕ чĕререн юратса пăхать, тăрăшать. Ездовой çула каять те, лашана хисеплемесĕр пăхса, чунсăрран хăваласа халтан ярать. Кун пек, паллах, ĕç йĕркелĕ пулма пултараймасть.

Конюх та, ездовой та лашана куç шăрçине сыхланă пек сыхламалла. Çула каякан çын лашана мĕнле кӳлнине те тĕрĕслес пулать. Анаталла анна чух, хырăмсалăхне хытарса, çавăтса анмалла, тăвалла хăпарнă чух урхалăхне пушатас пулать. Çакăсем вĕсем çĕнĕ япаласем мар, анчах лашана упрас ĕçре пысăк вырăн йышăнаççĕ: ездовойăн вĕренеç пĕлмелле тата çул çинчи закон вырăнне хумалла. Çапла вĕрентет Пайманов юлташ.

— Час-часах хăшпĕр колхозниксем курсан, чун кӳренет: анаталла кайнă чух вăл çил-тăвăл тустарса, сиккипе. Некрасовăн Топтыгин генералĕ пекех, хăвалать, тăвалла хăпарнă чухне лав çинчен анмасть лашине пулăшас вырăнне ăна пушăта çап тарать. Хăш чухне çавăн пек киревсĕре курсан вара, лашине мар, çав çынна хăйне пушăпа çаптарас килет,—тет Николай Никитич. вĕриленсе. Чăн та, ездовойсене лашапа çӳреме вĕрентмелле, лашасене тискеррĕн те чунсăрран пăхмасăр колхозсенче пачах та пулмалла мар.

Николай Никитич кашни кĕсререн çулсеренех пĕрер тиха илсе çитĕнтерет. Юлашки 6 çул хушшинче вăл колхоза 34 тиха çитĕнтерсе, лаша туса панă. Кунта кĕсре хĕсĕр юлни е хăм пăрахни халиччен пулман. Колхоз Хĕрлĕ Çара вăрçă вăхăтĕнче кăна 32 лаша панă, апла пулсан та колхозра лаша шучĕ чакман, ӳссех пынă. Çавăнта ĕнтĕ Н. Н. Пайманован мухтава тивĕçлĕ ĕçĕ куç умне тухса тăрать.

— Пирĕн колхозăн Хĕрлĕ Çара панă лашисем артиллерире те, кавалерире те, обозра та ĕçлеме пултараççĕ.—тет Пайманов юлташ.—Тен, эпĕ пăхса çитĕнтернĕ лашапах халĕ ылханлă Германи çĕршыăнче тупăсем турттарса çӳреççĕ пуль, е кавалерине лекнĕ пул